27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944
НОЯБРЬ
22
ЮНКУН
230(6725) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче Венгрире пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра — ЧАНАЛОШ, ГЕСТЕЛЬ, СИРМА, ЧАБА, ДИОШ-ДЬОР, ОШТОРОШ, ЕГЕРСАЛОК, ДЕМЬЕН, ДЕМОСЛО, МАРКАЧ, ВИШОНТА ятлă пысăк ялсем тата КИШТАЛИЯ ятлă чугун çул станцийĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 45 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 25 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Венгрире пĕр соединени чаçĕсем вăйлă çапăçнă хыççăн Чаба ялне туртса илнĕ. Унтан пирĕн боецсем, тусем хушшипе аякран кайса, халăх пурăнакан ытти темиçе пункта туртса илнĕ. Дьендьеш хулинчен хĕвелтухăçнерехре уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем умлăн-хыçлăн пилĕк хут контратака пунă. Тăшмана халран кăларнă хыççăн совет çарĕсем гитлеровецсене вăйлăн пырса çапнă та каялла хăваласа янă. Тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 600 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 20 танкĕпе хăй теллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Нимĕçсемпе венгерсен 460 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем чылай участоксенче çапăçса разведка тунă. Тупăсемпе, миномётсемпе пенĕ хыççăн совет пехотинецĕсем тăшмана атакаланă. Алă вĕççĕн тытăçса илнĕ хыççăн пирĕн подразделенисем нимĕçсене хăваласа кăларнă та вĕсен позицийĕсене йышăннă. Тăшман хăйĕн пехотипе танкĕсен чылай пысăк вăйĕсене контратакăна кĕртсе янă. Пирĕн чаçсем нимĕçсен контратакисене пурне те сирсе янă, гитлеровецсене пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире тăшмана хирĕç тупăсемпе, миномётсемпе персе тăнă. Пĕр соединени снайперĕсем икĕ кун хушшинче 63 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн авиаци Ликк тата Тройбург чугун çул станцийĕсене тапăннă. 5 паровоз тата 30 вагон пĕтерсе тăкнă. Станци территорийĕнче пушарсем тухнă.

* * *

Остроленка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман отрячĕсем, тĕтрепе усă курса, разведка тума хăтланнă. Пирĕн хуралта тăракан постсем гитлеровецсене вăхăтра асăрханă та пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, сапаласа янă. Красноармеецсем Чистяковпа Гордеев юлташсем минăсем лартса тултарнă вырăнсенчи çулсене хӳтĕлесе тăнă чухне икĕ нимĕç разведчикне тыткăна илнĕ те штаба илсе пырса панă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 6.000 тонна таякан транспортне, хуралта çӳрекен 2 карапне тата хăвăрт çӳрекен 2 десант баржине шыва путарнă.

* * *

Пирĕн çарсем нимĕçсен хирти почтине тытса илнĕ. Çырусем хушшинче пĕр Х. Швабе ятлă нимĕç Германири Любек хулинчен Рига хулине Лассман патне çырнă çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Тĕмĕн чухлĕ кĕтнĕ хыççăн фронтра лăпкă тăрать. Эпĕ Рига хулинчи хамăрăн пӳрт çинчен тата иртнĕ лайăх пурнăç çинчен шутлама пултаратăп. Кунта, Любекра, питĕ усал. Кун каçиччен 4—5 хут, çитменнине тата çĕрле пĕр икĕ хутчен, эпир ялла чемодансем илсе бомбоубежищĕсене чупатпăр. Ригăран кунта килме питĕ хăрушă пулчĕ. Эпир 4 çĕр çывăраймарăмăр. Рига хулине таврăнас шухăшпа шанчăка эпир пĕр минутлăха та хăвармастпăр. Эпир хамăртан хамăр кашни кунах ыйтатпăр: хăçан эпир Рига хулине таврăнса, каллех лайăх пурăнма пуçлăпăр? Тĕрĕссине каласан, Рига хули пирĕншĕн иккĕмĕш тăван хула пулса тăчĕ. Любек хулинче халĕ эпир хамăра хамăр ютсем пекех шутласа, кĕтесрен кĕтессе сулăнса çӳретпĕр».

Çакна пурте пĕлеççĕ: фашистла нимĕç çарĕсем Рига хулине оккупацилесе илсенех хулана Германин тĕрлĕ районĕсенчен нимĕç колонисчĕсем пырса тулнă. Гитлеровецсен штатски форма тăхăннă мародерĕсемпе бандичĕсем саранча пек вĕçтерсе килнĕ. Вĕсем совет пурлăхне ярса илме тăрăшнă. Пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕçсене Совет Латвийĕнчен тапса кăларма тытăнсан, фашист колонисчĕсем алă айĕнчи пурлăхне, пуринчен ытла çын япалисене илсе, хуларан ухмаха ернĕ çынсем пекех тухса тарнă. Çавсемпе пĕрле çак Х. Швабе те тухса тарнă мĕн. Хăраса ӳкни лайăххах иртсе кайман та, нимĕçсем каллех Ригăна каялла таврăнасси çинчен ĕмĕтленеççĕ, кунта каллех Латви халăхне ĕмсе пурăнасшăн. Х. Швабепе унпек ытти нимĕçсене те кунччен курнă уроксем усăллă пулман иккен. Вĕсем çаплах Совет Союзĕнчи хуласемпе пуянлăха хапсăнаççĕ. Пĕр енчен, нимăса пĕлмен чарусăрскерсем, тепĕр енчен, çав тери ухмахскерсем, фашистла нимĕçсем çакна нимĕнпе те ăнланса илме пултараймаççĕ: совет çĕршывĕ фашистла ирсĕрсенчен ĕмĕрлĕхех тасалчĕ. Нимĕçсене текех Рига хулине те, пирĕн ытти хуласене те курма пулас çук ĕнтĕ. Темиçе хут шаккаса ватнă гитлеровецсем нимĕ те вĕренсе çитеймен. Апла пулсан, пирĕн Хĕрлĕ Çар вĕсене тата темиçе хутчен лайăххăн вĕрентсе илĕ.

Югослави премьер-министрĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Иван Шубашич Мускава килни

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче Мускава Белград хулинчен Югослави премьер-министрĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Иван **Шубашич** господин килнĕ. Шубашич господинпа пĕрле Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕн Заместителĕ Эдвард **Кардель**, Югославин Совет Союзĕнчи Посолĕ Станое **Симич** господин, Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Лондонри представителĕ Владимир **Велебит** генерал-майор, **Ф. Е. Махин** генерал-лейтенант, çавăн пекех тата Совет Союзĕн Югославири Çар Миссийĕн членĕсен ушкăнĕ **А. Н. Мельников** генерал-майорпа пĕрле килнĕ.

Мускаври Киев вокзалĕнче вĕсене çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ **И. М. Майский**, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕ **В. А. Зорин**, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕн ĕçĕсене туса тăракан **Г. И. Фомин** тата Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăну отделĕн Начальникĕ **М. П. Кутузов** генерал-майор, çавăн пекех тата Югославин Совет Союзĕнчи çар Миссийĕн Начальникĕ **В. Терзич** генерал-лейтенант тата Британин Совет Союзĕнчи Посольствин представителĕ **П. Кроствейт** господин кĕтсе илнĕ.

Мускава килнĕ çынсене хисеплесе, вокзалра хисепле хурал тăратнă тата Югославипе Совет Союзĕн флагĕсене çакнă.

В. М. Молотов И. Шубашич господинпа калаçни

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов** Югослави премьер-министрĕпе тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе **И. Шубашич** господинпа калаçнă.

Николай Александрович Булганина çар званийĕ — арми генералĕ ятне парасси çинчен

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать: Николай Александрович Булганина СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званине — арми генералĕ ятне парас.

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль, 1944 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕ.

ХРОНИКА

СССР Союзĕн Совнаркомĕ арми генералне Н. А. Булганина СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулма уйăрса лартнă.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарар, выльăхсене лайăх хĕл каçарар

(ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ районсенчи ертсе пыракан работниксен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсен тата çав ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕнче тунă доклаДран)

Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи колхоз хресченĕсем пекех, фронта пулăшассипчен хастарлăн ĕçлеççĕ. Пирĕн республикăри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене правительство кăтартса панă срoксенче организованно ирттереççĕ тата государство умĕнчи хăйсен обязательствисене тыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăх специалисчĕсем вăрçă вăхăтĕнче колхозсен выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетессишĕн те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

Вăрçă вăхăтĕнче фермăсенчи тупăш паракан выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 83,2 процент, сыснасем енĕпе 35,6 процент, сурăхсем енĕпе 132,5 процент ӳсрĕ. Пирĕн республикăри колхозсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăртрах ура çине тăратма пулăшас тесе, 1943 тата 1944 çулсенче Украинăри, Белоруссири тата Смоленск, Орел облаçĕсенчи колхозсем валли 2.600 лаша, мăйракаллă шултăра выльăхсем 4.000 пуç, сыснасем 8.000 ытла, 9.100 сурăх тата 5.000 хур янă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес тĕлĕшпе Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата пĕтĕм Союзри ăмăртура виççĕмĕш премие илме тивĕçлĕ пулчĕç. Çĕрпӳ районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1944 çулхи государство планне кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 107,5 процент, сыснасем енĕпе 100,4 процент, сурăхсем енĕпе 115,9 процент тултарнă.

Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем иртнĕ 10 уйăх хушшинче мăйракаллă шултăра выльăхсен йышне 22,7 процент, сыснасен йышне 17,2 процент, сурăхсен йышне 36 процент ӳстернĕ. Çак çитенӳсене район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн колхоз общественноçĕ партипе комсомол организацийĕсем тата район руководителĕсем куллен тимлĕн ĕçленипе тума пултарнă. Райсовет исполкомĕпе парти райкомĕ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă решение çирĕппĕн пăхăнса пырса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтăва хăйсен ларăвĕсенче тăтăшах сӳтсе яваççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе кашни колхоз тăрăх уйрăммăн конкретлă ертсе пыраççĕ. Çакăн пек тунине пула выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем, колхоз руководителĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем хăйсен ответлăхне ытларах туйса ĕçлеме пуçларĕç.

Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене — аш-какай, сĕт, çăм тата ытти продуктсене памалли плана срокчен пурнăça кĕртнĕ.

Шупашкар районĕнчи колхозсем те начар мар ĕçленĕ. Унта кăçал 10 уйăх хушшинче мăйракаллă шултăра выльăхсен йышĕ 9,3 процент, сыснасен йышĕ 19,2 процент, сурăхсен йышĕ 12,4 процент ӳснĕ. Куславкка, Чурачăк, Октябрьски тата Вăрмар районĕнчи колхозсем те выльăх-чĕрлĕхсен йышне чылай ӳстернĕ.

Пирĕн республикăри малта пыракан нумай колхозсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче артель хуçалăхне малалла çирĕплетсе пычĕç тата çĕршыва фронта çултан çулах ялхуçалăх продукчĕсем ытларах та ытларах парса тăраççĕ.

Акă, сăмахран, Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоза илер. Вăрçă пирки ку колхозра та, ытти колхозсенчи пекех йывăрлăхсем сахал мар пулнă. Ĕç нумайланнă, çав вăхăтрах ĕçлекенсем тата турттăм вăйĕ чакнă. Апла пулин те, колхоз ялхуçалăх продукчĕсем тăвассине сахаллатман кăна мар, пачах урăхла, вăл хăйĕн хуçалăхне аталантарса пынă, хăйĕн ĕçне вăрçă тапхăрне тивĕçлĕ йĕркелесе, ăна çĕршывăн оборона ыйтăвĕсене тивĕçтерессине пăхăнтарса, кая юлса пыракансен ретĕнчен малта пыракансен ретне тухнă. Вăрçă вăхăтĕнчи виçĕ çул хушшинче «Дружба» колхоз государствăна 16 пин пăт тырă, 2 пин пăта яхăн аш-какай, 37 пин литр сĕт, 36 пин çăмарта, 522 килограмм çăм, 9.700 пăт çĕрулмипе пахча çимĕçсем панă. Колхоз выльăх-чĕрлĕхсем ӳстермелли 1944 çулхи плана пĕтĕмпех пурнăça кĕртсе çитернĕ тата çитес çулшăн аванс шучĕпе 60 центнер аш-какай, 1.500 литр сĕт, 40 килограмм брынза панă.

Асăннă колхозра вăрçă çулĕсенче мăйракаллă шултăра выльăхсен йышĕ 18 пуçран пуçласа 159 пуçа çитнĕ, сыснасен йышĕ 63 пуçран пуçласа 100 пуçа çитнĕ, сурăхсен йышĕ 9 пуçран пуçласа 201 пуçа çитнĕ тата хурт-хăмăр çемьисен йышĕ 64 çемьерен пуçласа 135 çемьене çитиччен ӳснĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленнĕ. Пăрусем усрама çĕнĕ çурт, çĕнĕрен сысна вити тунă, выльăх-чĕрлĕхсем усрамалли мĕн пур çурт-йĕрсене юсаса йĕркене кĕртнĕ. Выльăхсем валли утăпа улăмсăр пуçне 170 центнер утă çăнăхĕ тата витаминлă утă, йывăç çапписем, армутипе вĕлтрен нумай хатĕрленĕ.

Пирĕн республикăра темиçе çĕр колхоз çавăн пек лайăх ĕçлеççĕ.

Республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре паллă çынсем те выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тата çамрăк выльăхсене çитĕнтерес тĕлĕшпе лайăх çитĕнӳсем тунă. Çапла, Вăрмар районĕнчи «Красные Шигали» колхозра сысна пăхакан Чернова юлташ хăй çумне çирĕплетнĕ 8 сысна аминчен 134 çăвăр илсе çитĕнтернĕ. Ку вăл кашни сысна ами пуçне 17 çăвăр çитĕнтернине пĕлтерет. Муркаш районĕнчи «Свобода» колхозри сысна пăхакан Семенов юлташ фермăра 10 çул ĕçлет ĕнтĕ. Вăл 63 çулта. 1944 çулта хăй çумне çирĕплетнĕ 8 сысна аминчен 128 çăвăр, урăхла каласан кашни сысна аминчен 16-шар çăвăр илсе çитĕнтернĕ. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозри пăру пăхакан Ксения Григорьева юлташ (вăл фермăра 1934 çултанпа ĕçлет) мĕнпур пăрусене пăхса çитĕнтернĕ. 1944 çулта вăл 32 пăру çитĕнтернĕ. Вăл пăхакан пăрусем 6 уйăха çитиччен талăкра 552 грамм хутшăнса пынă. Первомайски районри «Совет» колхозри ĕне сăвакан Начальникова юлташ кăçалхи 10 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 1.230 литр сĕт суса илнĕ. Çаканшăн вăл ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх 150 литр сĕт илнĕ. Элĕк районĕнчи «Новый путь» колхозри ĕне сăвакан, çак канашлăвăн участници Кульпина юлташ çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтерет. Пăрусене яланах тĕплĕн хатĕрленĕ апат çитерет, вĕсене утă шӳтернĕ шыв ĕçтерет. Вăл 32 пăру пăхса çитĕнтернĕ. 1943—1944 çулсенче вăл кашни ĕне пуçне 1.375 литр сĕт суса илнĕ. Çавăншăн вăл ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх 1.000 литр сĕт илнĕ.

Малта пыракан колхозсем лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вăрнар районĕнчи Ураваш ялсоветĕнчи «Первое мая» колхоз (председателĕ Васильев юлташ) 24 кĕсререн 20 тиха илсе, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозри паллă конюх Пайманов юлташ çулсеренех кашни 10 кĕсре пуçне 8—9 тиха çитĕнтерет. Муркаш районĕнчи «Красная звезда» колхозри аслă конюх Степанов юлташ 15 кĕсререн 13 тиха илсе çитĕнтерет. Канаш районĕнчи «Виççĕмĕш пятилетка» колхоз (председателĕ Лукин юлташ) кăçал 10 кĕсререн 9 тиха илсе, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ.

Пирĕн республикăра лашасем ĕрчетес ĕçре Сăр леш енчи лаша заводĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл, ăратлă лашасем çитĕнтерсе, республикăри колхозсене çулсеренех 35—40 айăр парать. Кăçал унта 53 ăратлă кĕсререн 52 тиха илсе çитĕнтереççĕ.

Пирĕн республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлени çинчен калакан тĕслĕхсем сахал мар. Анчах та пĕтĕм республикипе илсен, кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Нумай райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тата çĕрĕç органĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксене, ялхуçалăх специалисчĕсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстермелли тата вĕсен тухăçлăхне çĕклемелли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăça кĕртессишĕн кĕрешме мобилизацилемен. Çавна пула вара республикăра выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ тата вĕсен тухăçлăхĕ чылай чакнă.

Выльăх-чĕрлĕхсем уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Элĕк, Муркаш тата Советски районсенче чылай вилнĕ, çав районсенче вĕсен хисепĕ чакнă.

Пуриншĕн те паллă, выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес ĕçре ама выльăхсем мĕн чухлĕ пурри пысăк вырăн йышăнса тăрать. Чылай районсем иртнĕ 10 уйăх хушшинче ама выльăхсен йышне самаях ӳстерчĕç. Çапла, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕнесен хисепĕ Канаш районĕнче 11,6 процент, Çĕрпӳ районĕнче 10,3 процент, Чурачăк районĕнче 5,1 процент ӳснĕ. Сурăхсен йышне Шупашкар районĕ 26 процент, Çĕрпӳ районĕ 25,6 процент, Ишлей районĕ 8,6 процент, Октябрьски район 6,8 процент, Вăрмар районĕ 6,8 процент, Чурачăк районĕ 9,1 процент ӳстернĕ.

Анчах та республикипе илсен, ама выльăхсем ӳстермелли плана пĕр йышши выльăх енĕпе те пурнăça кĕртсе çитермен. Унтан та ытларах, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Чкаловски, Вăрнар, Советски тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсенче ĕнесемпе сыснасен тата сурăхсен йышне чакарни палăрать.

Нумай районсен руководителĕсем, зоотехникăпа ветеринари работникĕсем ама выльăхсен хисепĕ чакни колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла аталантарса пыма чăрмантарнине шута илмерĕç.

Пирĕн республикăри колхозсенче мăйракаллă шултăра выльăхсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе пурнăça кĕртмелли тĕп задачăсенчен пĕри вăл — ĕнесен хисепне ӳстересси пулать. Çакăн пек тăвас пулать: ĕнесем мăйракаллă шултăра выльăхсем хушшинче 40 процентран кая мар пулмалла. Çавăнпа та ĕнесене пăхса усрасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Зоотехникăпа ветеринари комиссийĕ ирĕк памасăр пĕр ĕнене те нихăçан та расходлама юрамасть.

Пирĕн республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл — кăçал çуралнă çамрăк выльăхсем нумай вилни пулать. Çавна пула вара нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕхсен йышне хăйсем ӳстерме пултараймаççĕ. Вĕсен çамрăк выльăхсене колхозниксенчен илме тивет.

Колхозсемпе районсен руководителĕсем çамрăк выльăхсем вилнине апат çителĕклĕ пулманнипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Анчах та нумай фактсем çакна кăтартса параççĕ: выльăхсем вилесси, уйрăмах çамрăк выльăхсем вилесси, пĕтĕмпех вĕсене начар, чунсăррăн тата тирпейсĕр пăхнинчен килет.

Элĕк районĕнчи «Новый путь» колхозра кăçал 6 уйăх хушшинче 50 сысна вилнĕ. Вĕсем апат çителĕксĕр пулнă пирки вилнĕ теме çук. Унта кашни сысна пуçне 1,5 килограмм тырă расходланă тата вĕсене 170 центнер çĕрулми çитерсе янă. Апла пулсан, сыснасем апат пулман пирки мар, пачах урăхла, вĕсене начар пăхнă пирки, начар çуртсенче усранă пирки тата апатпа пĕлсе усă курман пирки вилнĕ.

Çамрăк выльăхсем вилесси, тĕпрен илсен, вĕсене хĕллехи вăхăтра сивĕ, тĕплĕн хатĕрлемен çуртсенче усранинчен, вĕсене пăхнă чухне зоотехникăпа ветеринари йĕркисене пăснинчен, колхозсен уйрăм руководителĕсем, ферма заведующийĕсем, сысна пăхакансем тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен ытти работниксем выльăхсене пăхса усрасси çине çиелтен пăхнинчен килет.

Выльăхсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатса, çамрăк выльăхсем ытларах илме тата вĕсене пурне те пăхса çитĕнтермелле тăвас пулать. Ахальтен мар ĕнтĕ халăх халлапĕ çапла калать: «Пăхмасăр кăткăсем çеç ĕрчеççĕ», тет.

Халĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн чи ответлă тапхăрĕ — выльăхсене пăруланă вăхăтра пăхса усрамалли тапхăр пуçланчĕ. Выльăхсене хĕллехи вăхăтра пĕлсе пăхас пулать. Çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăвармалла, вĕсене лайăх пăхмалла, ăшă та типĕ çуртсенче вырнаçтарасси çинчен тĕплĕн шутламалла. Çамрăк выльăхсем яланах тутă пулччăр, вĕсене выльăх пăхма юрататакан тата пĕлекен çынсем пăхчăр.

Нумай колхозсенче тата выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ вĕсене салатса пĕтернĕ пирки чакать. Хăшпĕр колхозсенче, сысна ĕрчетмелли плана тултарман пулин те, сысна çурисене уйрăм çынсене сутаççĕ. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем, çĕрĕç органĕсем енчен тĕрĕслесе тăманнипе усă курса, выльăхсене какай тума пусаççĕ (Пăрачкав районĕнчи «Факел», Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче). Выльăхсене çавăн пек салатса пĕтерессине тĕпренех пĕтермелле.

Пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл — выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ начар пулни тата ăратлă выльăхсене сахал ӳстерни пулать. Кăçал 10 уйăх хушшинче республика тăрăх кашни ĕне пуçне вăтамран 700 литр сĕт кăна суса илнĕ. План тăрăх 1.100 литр суса илмелле пулнă.

Пирĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре час-часах зоотехника культурăлăхĕ çителĕксĕр пулни палăрать. Нумай колхозсенче выльăхсене куллен тасатмаççĕ. Çавна пула вара выльăхсем пылчăкланаççĕ, ӳт-пӳ чирĕсемпе чирлеççĕ. Çакă вăл выльăхсен тухăçлăхне чакарать.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕхсене зоотехника кăтартнă нормăсем тăрăх апат çитерессине ĕçе кĕртмен. Пĕр тĕрлĕ апатсем кăна çитересси хытă сарăлнă. Апатсене хатĕрлесе, вакласа, пĕçерсе парассине пур çĕрте те кирлĕ пек организацилемен. Сĕт нумай паракан ĕнесене нумай хутчен сăвас майпа усă курмаççĕ. Çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтернĕ чухне зоотехника правилисене пăсаççĕ. Пăру пăхакансенчен нумайĕшĕсем пăрусене ĕçтермелли нормăна пăхăнмаççĕ. Пăрусене нумай чухне хăйсен амăшĕсен сĕтне мар, урăх ĕнесен сĕтне параççĕ. Пăрусене сивĕ сĕт ĕçтернине те нумай çĕрте тĕл пулма пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен опычĕ çамрăк выльăхсене вар хырăм чирĕнчен сыхласа усранă çĕрте вĕретнĕ утă шывĕ лайăх эмел пулнине кăтартса парать. Анчах та çав майпа пирĕн сахал фермăсенче кăна усă кураççĕ.

Çамрăк выльăхсене ытерех апат çиме вĕрентмеççĕ, çавна пула вара вĕсем имшер ӳсеççĕ. Çамрăк выльăхсене уйрăм ушкăнсене уйăрса, вĕсене кирлĕ пек тăрантармалла тăвас пулать.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли кирлĕ условисенчен пĕри вăл — выльăх-чĕрлĕхсен ăратлăхне тĕрĕс йĕркелесе пырасси пулать. Анчах та республикăри чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен ăратлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Выльăхсене зоотехника тĕлĕшĕнчен шута илмеççĕ, чи пысăк тухăçлă выльăхсене уйăрса, ăратлăх кĕнеки çине çырмаççĕ. Вĕсене кĕнеке çине çырнă пулин те, ĕç малалла каймасть. Чылай районсенчи ăратлă выльăхсен фермисенче ĕçсем япăх тăраççĕ-ха. Çав фермăсенче выльăхсене пăхасси колхозсенчи ытти фермăсенчинчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмасть.

Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсенчен нумайĕшĕсем выльăхсен ăратлăхне ӳстерес ĕçпе çителĕксĕр интересленеççĕ. Выльăхсен пахалăхне лайăхлатас тата вĕсен тухăçлăхне ӳстерес ĕç çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен, зоотехниксен выльăх-чĕрлĕх фермисем ĕçне лайăхлатассине организацилесе пыраканĕсем пулма тивĕçлĕ.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра совет интеллигенцин вăрçă вăхăтĕнчи ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Пирĕн республикăра чаплă специалистсем — зоотехниксемпе ветеринари работникĕсем пур. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи старший ветврач Уленлеев, Çĕрпӳ районĕнчи ветврач Боровков, Шупашкар районĕнчи райçĕрĕç пайĕн старший зоотехникĕ Михайлов т. ыт. те. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксене пысăк пулăшу параççĕ. Анчах та шел, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри хăшпĕр специалистсем чылай чухне выльăхсем çине чунсăррăн пăхнипе килĕшсе тăраççĕ, колхозсене çитменлĕхсене пĕтерме çителĕксĕр пулăшаççĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, райсовет исполкомĕсен тата ВКП(б) райкомĕсен колхозсенче зоотехника ĕçне татăклăнах лайăхлатмалли мерăсем йышăнмалла, ялхуçалăхĕнчи специалистсене хăйсен кирлĕ ĕçне лайăх туса пыма пулăшмалла.

Республика тăрăх илсен, лашасен йышне ӳстересси питех те çителĕксĕр пулса пырать, лашасем ĕрчетмелли плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 78 процент кăна, тихасем ĕрчетмелли плана 60,9 процент çеç тултарнă. Иртнĕ вунă уйăх хушшинче лашасем чылай вилнĕ. Уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Пăрачкав, Комсомольски районсенче чылай вилнĕ.

Республикăри нумай колхозсенче хăмлатмалли кĕсресене пăхса усрассишĕн тивĕçлипе тăрăшмаççĕ. Вĕсемпе тĕрлĕ йывăр ĕçсенче усă кураççĕ, вĕсене кирлĕ пек пăхса усрамаççĕ. Чылай районсенче кăçал чуптарнă лашасем хăм пăрахни те пулнă.

Колхозсемпе районсен руководителĕсенчен пĕр пайĕ лашасем начар пулнине пĕтĕмпех апат çитменнипе сăлтавлама пăхаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Лаша лайăх пăхнине юрататать. Ахальтен мар халăх халлапĕ çапла калать: «Лайăх пăхсан — лаша та ырăланать». Пирĕн колхозсенче лашасене лайăх пăхни çитмест вара.

Лашасăр колхоз хуçалăхне çирĕплетме май çук пулин те, чылай çĕрте лашасем çине чунсăррăн пăхаççĕ. Анчах лашасем çине чунсăррăн пăхакансене никам та ответ тыттармасть (сăмахран, Шăхасан районĕнчи «Красный трактор», Ворошилов ячĕпе тăракан, Чкаловски районри «Большевик» тата ытти хăшпĕр колхозсенче).

Лашасемпе усă курас ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле тата лашасен хисепне ӳстерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме тытăнмалла.

Лашасене пăхнă тата вĕсемпе усă курнă çĕрте обезличкăна пĕтермелле. Кашни колхозрах лашасемпе çӳреме опытлă колхозниксене уйăрмалла, конюхсем мĕн таран ĕçлеме пултарнине тĕрĕслесе тухмалла. Унсăр пуçне, Çĕрпӳ районĕн опычĕ тăрăх, колхозсенчи лашасене кашни уйăхрах ятарласа тунă комиссисем тĕрĕслессине организацилемелле. Колхозсенчи мĕнпур лашасем валли лайăх утă тата, пуринчен ытла, акса тунă курăксен уттине Чăваш АССР Совнаркомĕ 1944 çулхи августăн 25-мĕшĕнче йышăннă постановленипе çирĕплетнĕ нормăсем чухлĕ уйăрса хумалла. Государствăна тырă памалли обязательствăсене пурнăçланă тата вăрлăх фончĕсене хывнă хыççăн лашасене çитерме тырпул кирлĕ таран уйăрса хумалла. Лаша апачĕсене ытти выльăхсене çитерме чарас пулать.

Пĕтĕ кĕсресем хăм пăрахассине пĕтерес тесен, вĕсемпе йывăр ĕçсенче усă курма юрамасть. Лашасен ĕçне çăмăллатма мăйракаллă шултăра выльăхсене ĕçе ытларах явăçтармалла.

Кăçал октябрь тата ноябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче пур районсенче те колхозсем

(Юлашки 2-мĕш страницăра)

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ доклачĕн вĕçĕ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленине тĕрĕслĕсе тухнă. Республикăри нумай колхозсем çак кирлĕ ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхнă, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăхсем усрамалли çуртсене пĕтĕмпех хĕле хатĕрлесе çитернĕ.

Анчах та хĕл пуçланчĕ пулин те, хăшпĕр районсенче фермăсене выльăхсене хĕллехи вăхăтра пăхса усрама хатĕрлесе çитермен-ха. Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Шăхасан, Октябрьски, Сĕнтĕр, Муркаш тата Çĕмĕрле районĕсенче выльăх-чĕрлĕх фермисене чылай колхозсенче юсаса çитермен тата ăшăтман.

Колхозсемпе çĕрĕç органĕсен, райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсен хальхи тапхăрти хисеплĕ задачи вăл — мĕнпур выльăх-чĕрлĕхсем валли лайăх çуртйĕрсем хатĕрлесе çитересси пулать. Уйрăмăнах çамрăк выльăхсене усрамалли çуртйĕрсене юсаса ăшăтасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен çав ĕçе мĕнле пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла.

Пирĕн республикăри колхозсем кăçал шултăра тата сĕткенлĕ апатсем хатĕрлес тĕлĕшпе иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлерĕç. Анчах та Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ районсемпе колхозсен руководителĕсем çав апатсемпе тирпейлĕн усă курмалла тумасан, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсем кăçал та апат çитменнипе аптрама пултараççĕ. Иртнĕ çулта нумай колхозсенчи выльăхсем валли апат çитменни апатсене кĕркуннехи вăхăтра салатса пĕтернинчен килнĕ. Кăçал та çавăн пек ан пултăр тесен, пĕтĕм пухса кĕртнĕ утта, улăма, арпалăхра юлнă апатсене пĕтĕмпех виççе шута илмелле, актсем çырса, кладовщиксене е колхозсенчи ферма заведующийĕсене памалла. Хатĕрленĕ апатсене шута илесси хальхи тапхăрта республикăри нумай колхозсенче çителĕксĕр пулса пырать-ха.

Нумай колхозсен выльăх апачĕсен балансĕнче утă пысăк мар вырăн йышăнса тăрать. Шултăра апатсем шутĕнче, тĕпрен илсен, сурхи тата кĕрхи тырăсен улăмĕ шутланать. Çавăнпа та халех çав шултăра апатсене лайăхлатас тĕлĕшпе кашни колхозрах мероприятисем палăртса хумалла. Мĕнле апата хăçан тата ăçта лайăхлатмаллине, мĕнле çитермеллине палăртса хумалла. Çак ĕçре колхозсене зоотехниксен практикăллă пулăшу памалла.

Сыснасене пăхса усранă çĕрте çĕрулми пысăк вырăн йышăнса тăрать. Апла пулин те, Элĕк, Ишлей, Калинино, Елчĕк тата ытти районсенчи колхозсенче сыснасем валли кирлĕ таран çĕрулми уйăрса хăвармаççĕ, çĕрулмине колхозниксене, вĕсем хăйсен пахчисенче тухăçлă çĕрулми туса илнине пăхмасăрах, ĕçкунĕсем тăрăх салатса параççĕ. Çĕрулмине çавăн пек усăсăр расходланине халех пĕтерес пулать. Государство умĕнчи обязательствăсене тултариччен, вăрлăх тата страховой фондсем тăвиччен, фураж фончĕ уйăрса хуриччен ялхуçалăхĕн нимĕнле продукчĕсене те ĕçкунĕ тăрăх салатса памалла мар.

Выльăх апачĕсене расходламалли уйăхри плансене халех туса пĕтермелле, вĕсене райсовет исполкомĕсен ларăвĕсенче çирĕплетмелле тата çирĕппĕн пурнăça кĕртсе пымалла. Колхоз председателĕсем выльăх апачĕсемпе мĕнле усă курнине çирĕппĕн тĕрĕслесе пыма тивĕçлĕ.

Кăçал нумай колхозсенче ферма сывăхĕнчи участоксене акса çĕрулми, тымар çимĕçсем тата ытти апатсем чылай туса илнĕ. Çав апатсене пĕтĕмпех фермăсене памалла. Çав апатсене пăхса çитĕнтернĕ работниксене, партипе правительство решенийĕ тăрăх, планран иртттерсе туса илнĕ апатсен хисепĕнчен виççĕмĕш пайне парас пулать.

Ферма заведующийĕсен тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ытти работниксен халех çĕрулми, выльăх кăшманĕ, турнепс, кăшман, кишĕр тата ытти культурăсен вăрлăх запасĕсене тăвасси çинчен шутламалла. 1945 çулта çуркунне çав культурăсене ферма участокĕсенче ытларах акса хăвармалла тăвас пулать. Çавăн пек тусан вара пирĕн фермăсен, выльăх-чĕрлĕхсем валли колхозсем уйăрса паракан апатсем сĕр пуçне, хăйсен те выльăх апачĕсем пулаççĕ.

Çакна палăртас пулать: пирĕн республикăри нумай районсенче ветеринарипе зоотехника работникĕсем, çавăн пекех тата район руководителĕсемпе колхоз председателĕсем те ветеринари мероприятийĕсене тивĕçлипе хакламаççĕ. Вăл, чи малтанах, сарăлакан чирсене хирĕç кĕрешесси çине тĕрĕс пăхманнинче палăрать. Хăшпĕр работниксем хушшинче çакăн пек йăла пурри сисĕнет: «Сарăлакан чирсене хирĕç кĕрешмелли мероприятисене чирсем палăрсан та пурнăça кĕртетпĕр», теççĕ вĕсем. Практикăра çакă вăл сиен нумай кÿрет.

Колхозсен тата колхозниксен выльăх-чĕрлĕхĕсене ветеринари тĕлĕшĕнчен пулăшасси тÿрреммĕнех специалистсенчен тата ветеринари учрежденийĕсенчен килет. Пĕтĕмĕшпе илсен, ветеринари работникĕсем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ, анчах та вĕсене Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата районсен руководителĕсем енчен пулăшу пани кирлĕ. Ветеринари учрежденийĕсене эмелсем тата оборудованисем парса тăрасси çине те тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Выльăхсем хушшинче, уйрăмăнах лашасем хушшинче, сарăлнă чирсене (кĕçĕ, минингит т. ыт. те) пĕтерес тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла. Выльăхсене хĕллехи вăхăтра усрамалли мĕнпур çуртсене ветеринарипе санитари тĕлĕшĕнчен тивĕçлипе йĕркене кĕртмелле, мĕнпур выльăхсене ветеринари тĕлĕшĕнчен тĕрĕслесе тухмалла. Çакă вăл выльăхсене сыхласа усрама тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла вăйлатса пыма май парать.

Колхозсем выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухни чылай районсенче ку таранах çитсе те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлеме кадрсем çителĕклĕ тупса лартманнине кăтартса парать. Çак çитменлĕхе халех пĕтермелле. Фермăсенче ĕçлеме ĕçе юратакан тата пĕлекен колхозниксемпе колхозницăсене суйласа лартмалла. Выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçри специалистсен тата район руководителĕсен колхозсене фермăсен ĕçне тĕрĕс организацилеме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сдельщинăна ĕçе кĕртме, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркене ĕçе кĕртме пулăшмалла. Фермăсенче ĕçлекенсем улшăнса тăрассине пĕтерес пулать, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен опытлă работниксене нумай вăхăт хушши ĕçлеме çирĕплетмелле, вĕсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе сарса пымалла тата вĕсене зоотехника пĕлĕвĕсене алла илме пулăшмалла. Кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта ферма заведующийĕсен, конюхсен, дояркăсен тата ытти работниксен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлемелле. Курссем организацилемелле, ялхуçалăх специалисчĕсен вăйĕпе колхоз кадрĕсем валли семинарсем иртттермелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва организацилес тата выльăх-чĕрлĕх фермисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисемпе комсомол организацийĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ.

Çĕрĕç органĕсен тата парти райкомĕсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксен опытне сарассине тата малта пыракансен опытне пур колхозсенче те сарассине организацилемелле.

Пирĕн республикăри нумай колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăça кĕртрĕç тата çитес çулшăн аш-какай, сĕт, çăмарта тата ытти продуктсем нумай пачĕç. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕ 1944 çулта аш-какай, сĕт, çăм памалли плана тултарнă кăна мар, ăна ирттерсе пурнăça кĕртнĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр районсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ-ха. Ун пек районсен ретĕнче, чи малтанах, Комсомольски, Шăмăршă, Чурачăк, Йĕпреç, Чкаловски тата Первомайски районсем тăраççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе халех татăклăнах вăйлатмалла, мĕншĕн тесен хăшпĕр продуктсене (сĕт, çăмарта, брынза) хатĕрлемелли сезон иртсе пырать. Уйрăм çынсем хăйсен обязательствине мĕнле тултарни çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Малта пыракан районсемпе колхозсен опычĕ пирĕн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли мĕнпур обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме кăна мар, вĕсене ирттерсе пурнăça кĕртме условисем пуррине кăтартса параççĕ. Çав условисемпе пĕтĕмпех усă курмалла. 1944 çулхи обязательствăсене пурнăça кĕртсе çитернĕ колхозсен аванс шучĕпе çитес çулшăн аш-какай парассине сапса пымалла. Çакă вăл кашни колхозшăн кирлĕ ĕç пулса тăрать. Мĕншĕн тесен халĕ выльăхсем çулталăкри ытти вăхăтсенчинчен мăн тăртарах. Вĕсене государствăна парсан, фермăсенчи ытти выльăхсене пăхса усрама апат ытларах перекетлеме пулать. Аш-какай памалли обязательствăсене срокчен тултарни государствăшăн та усăллă, мĕншĕн тесен вăл лайăх пахалăхлă аш-какай илме пултарать. Государствăна аванс шучĕпе аш-какай паракан колхозсене хавхалантарас шутпа, СССР Совнаркомĕ хăйĕн 1944 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕнче çапла каланă: 1945 çулшăн аванс шучĕпе панă выльăхсен хисепне 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă хисепе кĕртмелле, тенĕ.

Пирĕн умра январĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕхсем мĕн чухлĕ пулнине хисепе илес ĕç тăрать. Выльăхсене шута илес ĕçе ялхуçалăх специалисчĕсене, партипе совет тата колхоз активне явăçтарса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çулталăк хушшинче тунă ĕç итогĕсене тĕплĕн шута илмелле тата республикăра ялхуçалăхĕн çав кирлĕ отраслне малашне аталантарса пымалли ĕçсене тĕплĕн палăртса хăвармалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе кая юлса пырассине пĕтерсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан облаçсемпе республикăсен ретне тухас тесен, пирĕн, чи малтанах, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарассишĕн тата уйрăмăнах лашасем ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тимлĕн ĕçлемелле. Пирĕн выльăх-чĕрлĕх йышне çĕнĕрен ÿстерсе ямалла, унăн тухăçлăхне ÿстермелле. Çапла вара государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене чыслăн пурнăçламалла. Çĕршывпа фронта выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах памалла тăвас пулать. Çак задачăна ăнăçлăн татса памашкăн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладра ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе ответлемелле.

Тылри ĕçыннисем, хăйсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçне Сталин юлташ пысăка хурса хакланипе хавхаланнăскерсем, пысăк çĕкленÿпе ĕçлени — çĕнĕ çитĕнÿсем тума май парать. Чăваш республикинчи ĕçыннисен, вăл шутра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксен те, Хĕрлĕ Çара пулăшса тăрассине тата та ытларах вăйлатмалла, ăна фашистла нимĕç тискер кайăкне хăвăртрах аркатса тăкма пулăшмалла.

СССР Совнаркомĕнче

И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнĕ май унăн ятне ĕмĕрлĕхе паллă туса хăвармалли çинчен

Вырăссен аслă поэчĕ-баснописецĕ Иван Андреевич Крылов вилни 1944 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче 100 çул тултарнă май СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Калинин хулинче И. А. Крылова памятник лартас.

2. Ленинград хулинчи Толмазов переулокне Крылов переулокĕ тесе ят парас.

3. Калинин хулинчи Вольная ятлă урама Крылов урамĕ тесе ят парас.

4. Ленинградри Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан библиотекăн вулав залĕнче И. А. Крыловăн бронзăран тунă бюстне лартас.

5. Çаксене И. А. Крылов ятне парас:

а) Ленинград хулинчи Фрунзе районĕнчи ача библиотекине;

б) Ленинград хулинчи арçын ачасен çичĕ çул вĕренмелли 24-мĕш номерлĕ шкулне.

6. Ленинград хулинчи Садовая урамри 81-мĕш номерлĕ çурт стени çине мемориальнăй хăма çапса хурас.

7. И. А. Крылов ячĕпе çак шкулсенче стипендисем памалла тăвас:

а) Мускаври Ленин орденлĕ Л. В. Ломоносов ячĕпе тăракан государство университетĕнче — филологи факультетĕнче вĕренекен студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тÿлемелли икĕ стипенди тата вырăс литературин кафедрин аспирантне уйăхне 800 тенкĕ тÿлемелли пĕр стипенди;

б) Ленинградри Ленин орденлĕ государство университетĕнче — филологи факультетĕнче вĕренкен студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тÿлемелли икĕ стипенди тата вырăс литературин кафедрин аспирантне уйăхне 800 тенкĕ тÿлемелли пĕр стипенди;

в) Совет писателĕсен Союзĕн литература институтĕнче—студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тÿлемелли тăватă стипенди;

г) Калининри М. И. Калинин ячĕпе тăракан педагогика институтĕнче — чĕлхепе литература факультетĕнче вĕренекен студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тÿлемелли икĕ стипенди.

—⊙—

ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ ТАВАТТАМĔШ КВАРТАЛТИ ПЛАНА НОЯБРĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	67,8	60,6	1	2
Шăхасан	55,5	57,3	2	4
Куславкка	53,0	82,0	3	1
Октябрьски	49,7	52,2	4	8
Первомайски	48,1	44,2	5	15
Комсомольски	41,8	47,2	6	11
Вăрнар	38,4	24,0	7	23
Вăрмар	37,3	27,6	8	21
Элĕк	36,3	25,9	9	22
Сĕнтĕрвăрри	36,2	52,8	10	7
Етĕрне	35,7	29,7	11	19
Красноармейски	35,7	54,0	12	6
Хĕрлĕ Чутай	34,8	54,4	13	5
Калинино	34,4	36,4	14	18
Елчĕк	33,6	46,6	15	13
Шупашкар	33,4	46,7	16	12
Чурачăк	32,2	36,8	17	17
Пăрачкав	31,0	49,0	18	10
Канаш	30,7	24,5	19	25
Çĕрпÿ	29,9	46,5	20	14
Тăвай	26,0	29,0	21	20
Сĕнтĕр	24,5	22,1	22	26
Советски	24,4	24,7	23	24
Çĕмĕрле	23,8	57,6	24	3
Муркаш	22,3	21,7	25	27
Чкаловски	22,1	41,3	26	16
Кувакино	19,0	40,0	27	9
Ишлей	13,6	20,0	28	28

Чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана срокчен тултарма пулчĕç

ВĂРНАР. Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозра Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 27 çул тултарни çинчен тунă доклада вĕренессине организациленĕ. Колхозниксем, çулпуçăн доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланса, ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума тата фронта пулăшассине кулленех вăйлатса пыма пулаççĕ. Çак кунсенче пулса иртнĕ пухура колхозниксем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана срокчен — Сталинла Конституци Кунĕ тĕлне тултарма пулчĕç. План тăрăх 1400 кубометр хатĕрлесе, турттарса тухмалла. Çав плана тултарас тесе, ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа вăрманта ĕçлеме çурран тата лашапа пĕтĕмпе 70 çын тухрĕç. Вĕсем ĕçе хĕрÿллĕн тытăнчĕç.

— Эпир плана тултармасăр вăрмантан тухмастпăр, — теççĕ колхозниксем.

Кольцовка колхозникĕсем Вăрнар районĕнчи мĕнпур колхозсемпе колхозниксене тата Вăрнар вăрманпромхозĕнче ĕçлекен Калинино районĕпе Красноармейски районри колхозниксене, хăйсенчен пример илсе, социализмлă ăмăртăва хутшăнма, çулпуçăн доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана срокчен тултарма чĕнчĕç.

Е. ВОЛКОВ.

Брюссель хулинчи площадьсенчен пĕрне Сталин юлташ ятне панă

БРЮССЕЛЬ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Брюссельри радио çапла пĕлтерчĕ: Брюссель хулинчи площадьсенчен пĕрне «Сталин Маршал Площачĕ» тесе ят панă.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи хĕрарăмсен конференцийĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Америкăри хĕрарăмсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Çав конференцие Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх совечĕн хĕрарăм комитечĕ пухнă. Конференци Совет Союзĕпе Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи хĕрарăмсен пурнăçĕ çинчен сÿтсе-явнă. Конференцире совет делегацийĕ те пулнă.

ПААСИКИВИ КАЛАНИ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинкири хаçатсем Финляндин çĕнĕ премьер-министрĕ Паасикиви каланине пичетленĕ. Паасикиви Финляндин телеграф бюровĕн представительне çапла каланă:

«Эпĕ,—тенĕ Паасикиви, — çĕршывăн хальхи лару-тăрăвне юрăхлăрах правительство тума тăрăшрăм. Правительствăн программи çинчен калас пулсан, пирĕн чи малтан Совет Союзĕпе ытларах килĕштерсе ĕçлеме тăрăшмалла. Перемири килĕшевĕн условийĕсене тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласа пымалла. Паллă ĕнтĕ, çакăнпа пĕрлех Финлянди Швеципе тата çурçĕрти ытти çĕршывсемпе экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен лайăх çыхăну тытса пырĕ.

Вăрçă пирки, халăха урăх çĕре куçарнă пирки, ĕççĕрлĕх пирки тата халăха кирлĕ япаласем парса тăрас пирки тухса тăнă экономикăллă тата политикăллă ыйтусем пирĕн нумай. Пирĕн ĕç питĕ нумай. Çапла ĕнтĕ, урăх программăна каласа пама та кирлĕ мар. Эпир çав йывăр ыйтусене татса пама пĕтĕм вăйпа тăрăшăпăр, тесе çеç каламалла. Коммунистсен партийĕ, ытти партисем пекех, хальхи законсем тăрăх ĕçлесе пурăнĕ. Финлянди хăйĕн государствин демократиллĕ йĕркине çирĕп пурнăçласа пырĕ, çав йĕрке вăл пирĕн государствăн никама пăхăнмасăр пурăнмалли тата хăйне кирлĕ пек пурăнмалли прави çине таянса тăрать».

МАНИУ ГОСПОДИН КАЯ ЮЛСА ЧĔННИ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта национал-царанистсен партийĕн руководителĕ Ю. Маниу «Трансильванири наци гвардийĕнче» тăракан юлташĕсене чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Унта Ю. Маниу наци гвардийĕн членĕсене Румыни правительстви хĕçпăшалсăрланма хушнине пăхăнма чĕнет. Румыни правительстви вĕсене — «Маниу ячĕпе тăракан ирĕклĕ отрядсене» — Çурçĕр Трансильванире мирлĕ халăха пусмăрланăшăн хĕçпăшалсăрланма хушнă.

Анчах та кунта çапла каламалла: Ю. Маниу чĕнсе калани ытла та кая юлнă, мĕншĕн тесен Румыни правительстви приказ кăларичченех Хĕрлĕ Çар командованийĕ хăйсене хăйсем ирĕклĕ отрядсем, батальонсем е «ирĕклĕ гварди» тесе калакан бандитла ушкăнсене пурне те пĕтерсе тăкнă.

ИРАН ВЛАÇĔСЕМ ДЕМОКРАТИЛЛĔ ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ХĔСĔРЛЕÇÇĔ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Çар губернаторĕ Хиджази тата полици начальникĕ Сейф Иранри демократиллĕ организацисене, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнине паллă тума митинг пухнăскерсене, çаплах хĕсĕрлеççĕ.

Кавалери чăçĕсем, мотоциклистсем, пулеметчиксем тата броневиксем Халăх партийĕн клубĕ, Профсоюзсен совечĕ, «Мардом» хаçат редакцийĕ тата Халăх партийĕн хĕрарăм организацийĕсен клубĕ вырнаçнă кварталта ноябрĕн 17-мĕшĕнче çĕрлеччен çÿренĕ. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче ирхине çар губернаторĕ хушнипе салтаксем Халăх партийĕн клубĕ çинчи тата Профсоюзсен совечĕн çурчĕ çинчи вывескăсене хăйпăтса илнĕ те Çар губернаторĕн управленине илсе кайнă. Çарсем çав çуртсене никама та ямаççĕ. Кунсăр пуçне вĕсем «ирĕклĕх фрончне» кĕрекен хаçатсене пичетлекен типографисене те йышăннă.

Паян кăнтăрла иртсен кăна, «ирĕклĕх фрончĕн», профсоюзсен тата Халăх партийĕн представителĕсем генеральнăй штаб начальникĕпе Размер генералпа тата çар губернаторĕпе Хиджази полковникпа калаçнă хыççăн кăна çарсене Халăх партийĕн клубĕ, Профсоюзсен совечĕн çурчĕ тата «Мардом» хаçат редакцийĕ патĕнчен илсе кайнă.

ПОЛЬШАРИ ÇĔР РЕФОРМИ

ЛЮБЛИН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ туса ирттерекен çĕр реформи пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăнă. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă çĕрсенче вăл Польша халăхĕн пур сийĕсене те çĕклентерсе янă. Жешув воеводтвинче çĕнĕ йĕркене пурнăça кĕртсе çитереççĕ. Хресченсене пама палăртнă пĕтĕм çĕрĕн 88 процентне вĕсене валеçсе панă ĕнтĕ. Ланцуцки уезд хыççăн çĕр реформине Нисковски уездра пĕтĕмпех пурнăça кĕртнĕ. Ярославски уездри хресченсем çак эрнере пысăк халăх праçникĕ туса ирттерме хатĕрленеççĕ, ăна вĕсем 65 фольварка валеçсе пĕтерсе, 10 пин гектар çĕр илнĕ май туса ирттереççĕ. Жешув районĕнче хресченсен 13 пин килĕ ытла çĕр илнĕ. Тăшмантан ирĕке кăларнă территорире ноябрь пуçланнă тĕле хресченсемпе ялхуçалăх рабочийĕсем пурĕ 40 пин çын ытла çĕр илнĕ.

Крайовая Çар лагерĕнчи тăшманла çынсем çĕр реформине кансĕрлеме хăтланни пĕтĕмпех пăчланса ларнă. Нумаях пулмасть Тычин местечкинче çĕре валеçсе пĕтернĕ май халăх уявĕ туса иртттернĕ. Хресченсене çĕр тытса тăма право паракан актсем панă хыççăн унта ксендз Боровец сăмах тухса каланă. «Нумаях пулмасть йышлă фольваркcем Крайовая Çар лагерĕнчи реакционерсем валли пысăк база пулса тăнă, халь çак базăна вĕсен ури айĕнчен туртса илнĕ. Крайовая Çар членĕсем тăшман разведчикĕсем пулса тăчĕç. Вĕсем демократсене пăшалпа переççĕ тата нимĕçсем валли шпионла хыпарсем пухаççĕ. Çавăнпа суд вĕсене тĕрĕссипе уголовнăй преступниксем тесе шутламалла». Ксендз Боровец ирĕке тухнă территорири темиçе миллион поляк патриочĕн шухăшĕсене каласа панă пулмалла.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 20-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Кăнтăр-хĕвелтухăç Голландире Венло хули районĕнче союзниксен çарĕсем Гельдемонтпа Кессель хушшинчи вăрманлă вырăна тăшмантан тасатнă. Разведка отрячĕсем Кессель хули çывăхĕнче Маас шывĕ çине тухнă. Мейель хулинчен çурçĕртерехре вĕсем Дерне каналĕ урлă каçнă.

Гейленкирхенпа Аахен хулисен районĕнче союзниксен çарĕсем çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Ноябрĕн 19-мĕшĕнче вĕсем Гейленкирхен хулине туртса илнĕ. Пруммерн хули таврашĕнче тăшман темиçе контратака тунă. Зеттерих хулине тăшмантан тасатнă хыççăн союзниксен чăçĕсем хуларан хĕвелтухăçнелле малалла кайнă. Унтан кăнтăртарахра союзниксем Хенген, Кинцвейлер хулисене туртса илнĕ.

Эшвейлер хулин кăнтăр таврашĕнче союзниксен патрулĕсем пралук картасемпе минăсем лартса тултарнă вырăнсенче çулсем хываççĕ; союзниксен çарĕсем Роэ хули патне пырса тухнă. Штольберг хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Гамих хулипе Гастернат хулине ирĕке кăларнă. Ку районра союзниксен чăçĕсем çамаях малалла кайнă. Кенигсмахер хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Лауштроф хули патне çитнĕ. Веллинген хули патĕнче чикĕ урлă каçса кайнă.

Мец хулине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ. Хăшпĕр чăçсем Мец хулин хĕвелтухăç хĕррине кĕрсе кайнă, çурçĕр енчен тата кăнтăр енчен наступлени туса пыракан ытти чăçсем Мец хулинчен хĕвелтухăçнерехре Вальер тата Водервиль пункчĕсенче пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ. Мец хулин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче союзниксен çарĕсем Сен-Симфориен утравĕ урлă наступлени туса пыраççĕ, çав вăхăтрах ытти чăçсем хулан çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче Сель шывĕ урлă каçса кайнă.

Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Дьез хулин çурçĕр хĕррине кĕрсе кайнă. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, союзниксен чăçĕсем Брамонт хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре темиçе миля малалла кайнă. Унтан тата кăнтăртарахра 11 хулана ирĕке кăларнă, вăл шутра — Рэикур, Арбуэй тата Баденвейлер.

Вогез тăвĕсем хушшинче Жерармер хулине ирĕке кăларнă. Бельфор хули патĕнчи проходри наступление вăйлатса пырса, союзниксен чăçĕсем Саппуа пунктне çитнĕ, ку пункт Рейн шывĕнчен 20 мильăра ларать. Ытти чăçсем Бельфор хулине пырса кĕресси виçĕ миля кăна юлнă.

Дюнкерк хули районĕнче тăшманăн çĕр çинчи вăйĕсем Мардика хаяррăн атакăланă, тăшман атакине сирсе янă. Ноябрĕн 19-мĕшĕнче тăшманăн ку районри артиллери батарейисене союзниксем вăйлăн тапăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене хаяррăн тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 20-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире 8-мĕш арми чăçĕсем пĕр участокра тăшман контратакисене сире-сире янă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Итали фрончĕн ытти участокĕнче пуринче те патрульсем кăна кĕрешнĕ.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Метохире Югославипе Албани чăçĕсем Печ тата Призрен хулисене штурмласа туртса илнĕ.

Албанирен тухса кайнă нимĕç çарĕсен юлашкисене Черногорире пĕр пĕчĕк участокра—Скадарски кÿлĕ—Подгорица тата Бока районĕнче çавăрса илнĕ.

Хĕвелтухăç Боснире Соколац хулипе Рогатица хули хушшинчи çул çинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Унта тăракан нимĕçсем Сараево хули патнелле татса тухасшăн. Нумай вăхăт хушши вăйлă çапăçнă хыççăн нимĕçсен пысăк чăçĕсем (вĕсене танксем пулăшса пынă) кăнтăр енчен чакакан нимĕç çарĕсен колоннипе пĕрлешнĕ.

Герцеговинăра нумай кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн Югослави чăçĕсем Посушье хулине ирĕке кăларнă. Халĕ вĕсем Широки Брег тата Состар хулисем еннелле чакакан нимĕçсене хăваласа пыраççĕ.

Словенире Югослави чăçĕсем, тăшман наступленине сирсе янă хыççăн тăшмана хăйне хăваласа пырса, Кочевье хулине вăркăнса кĕрсе кайнă, халь хула урамĕсенче çапăçаççĕ.

КАЛЬКУТТĂРАН КИТАЯ КАЯКАН НЕФТЕПРОВОД

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Калькуттăран Китая çитиччен нефтепровод тăваççĕ. Çак нефтепровод Китая нефть продукчĕсем тăратассине вăйлатмалла. Калькутта енчен çав нефтепровода 800 миля тăршшĕ ытла хурса тухнă та ĕнтĕ. Нефтепровод Калькуттăран Брамапутра улăхĕ тăрăх хĕвелтухăç Бенгалие пырса тухать, унтан Ассамари чей плантацийĕсем çумĕпе Гималай тăвĕсем тăрăх Бирмăна пырать, унтан вара Китая кĕрсе каймалла.

Парти райкомĕн инструкторĕ

Вăрçă вăхăтĕнче организациллĕ руководствăн пĕлтерĕшĕ сисĕнмеллех ÿсрĕ. Парти комитечĕн инструкторĕсем хăйсен тивĕçлĕ вырăнне тупрĕç. Чылай райкомсен инструкторĕсем партин пуçламăш организацисенче ĕçлес çĕрте пысăк опыт пухрĕç.

Инструкторсен ĕçĕ ăнса пырасси, чи малтан, вĕсен ĕçне йĕркелесе янинчен килет. Инструкторсен ĕçне йĕркелени—вĕсене уйрăм пуçламăш парторганизацисем çумне çирĕплетни пулса тăрать. Хăйĕн çумне çирĕплетнĕ парти организацисенче инструктор райкомăн ответлă представителĕ пулса тăрать.

Инструктор партин пуçламăш организацийĕсене райкомпа çыхăнтарса тăраканĕ пулса тăрать. Унăн тĕп задачи — парти решенийĕсене пурнăça кĕртсе пырассине йĕркелесси, партин пуçламăш организацийĕсенче партиллĕ-организациллĕ тата идейăпа политикăллă ĕçе йĕркелесе яма пулăшасси, райкомпа пуçламăш организацисем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси, çитменлĕхсене вăхăтра палăртса, вĕсене пĕтерме пулăшасси, партиллĕ ĕç опытне пухса, унпа ытти организацисене паллаштарасси, юлса пыракансене малта пыракансем пек ĕçлеме вĕрентесси пулса тăрать.

Инструкторăн тăтăшах партин пуçламăш организацисемпе çыхăнса ĕçлемелле, хăйĕн вăхăчĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне пуçламăш организацисенче ĕçлес çĕре памалла.

Анчах чылай райкомсен инструкторĕсем пуçламăш организацисене план тăрăх йĕркелĕн тухса çÿремеççĕ, вĕсене çителĕклĕ пулăшу парса пымаççĕ. Первомайски, Кувакино, Элĕк райкомĕсен инструкторĕсем, чылай вăхăт хушши пĕр колхозра е ялсоветĕнче уполномоченнăй пулса ĕçленĕ пирки, пуçламăш организацисенче сайра пулаççĕ. Çав вăхăтрах хăйсем уполномоченнăй пулса ĕçленĕ çĕрти пуçламăш организацисене те çителĕклĕ пулăшу памаççĕ. Ялан тенĕ пекех вĕсене, пĕр пĕр ĕç кая юлса пыни сисĕнсен, ялсене уполномоченнăйсем туса кăларса яраççĕ.

Паллах, ун пек чухне яла кайни кирлĕ. Анчах та, райком инструкторĕ хăйĕн ĕçĕпе пуçламăш организацисенче пулсан, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшнă пулсан, аванрах пулнă пулĕччĕ.

Çавăн пек кĕтмен çĕртен «прорыва» пĕтерме тухса каймалла ан пултăр тесен, решенисене, парти директивисене пурнăçласа пынине вăхăтра, тăтăшах тĕрĕслесе тăни кирлĕ, парти организацисемпе тăтăшах çыхăнса тăни кирлĕ, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшни кирлĕ.

Инструктор вăл — регистратор та мар, ревизор та мар. Инструктор вăл—парти решенийĕсемпе политикăллă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешекен боец. Инструктор пĕр фактран та пăрăнса иртсе кайма пултараймасть. Ялта пулнă чухне çитменлĕхсене тĕл пулсан, ялти руководительсене çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмалла, лайăх опытсем пулсан, вĕсене пурне те пĕлсе тăмалла тăвас пулать. Инструктор пуçламăш организацине пулса унтан тухса кайсан, пуçламăш организацин секретарĕ: çавна тума мана инструктор пулăшрĕ, тесе калама пултартăр.

Инструкторсем вырăнсене тухса çÿресси ĕçĕн чи кирлĕ форми пулса тăрать. Анчах ăна пĕртен-пĕр форма тесе шутламалла мар. Инструкторсен, хăйсен çумне çирĕплетнĕ организацисен пурнăçĕпе пурăнас тесен, парти организацисенчен райкома пыракан протоколсемпе, отчетлă материалсемпе, информациллĕ материалсемпе тăтăшах паллашса пымалла.

Анчах инструкторсенчен хăшĕ-пĕрисем çав ĕçе кирлĕ ĕç тесе шутламаççĕ. Вăл тĕрĕс мар. Çав документсем инструктора çитменлĕхсене ытларах курма пулăшаççĕ. Инструктор сĕннипе райком вăхăтра кирлĕ пек организациллĕ мерăсем йышăнма пултарать.

Инструктор хăйĕн çине хунă пысăк ĕçе хăйĕн политикăллă пĕлĕвне, хăйĕн тавра курăмне пĕрмаях ÿстерсе пырсан кăна, колхозăн экономикине пĕлсе тăрсан çеç ăнăçлăн пурăçласа пыма пултарать. Çавăнпа та унăн хăйĕн пĕлĕвне ÿстерессишĕн, тарăнлатассишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Инструкторсене райком секретарĕсен те яланах пулăшса пымалла. Вăхăтран-вăхăта канашлусем ирттермелле, унта вĕсен ĕçĕсене сÿтсе-явмалла. Теори ыйтăвĕсемпе семинарсем туса ирттермелле. Инструкторсен пĕлĕвне хăпартса, вĕсен ответлăхне ÿстерсе пымалла.

М. АНДРЕЕВ

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора́н — 0—07, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04203 Типография № 1, Управления полиграфпро[illegible] при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.